Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчене тухать

33 (7994) № * Юн кун, 2012 çулхи çу (май) уйăхĕн 3-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

Районта тирпей-илем кĕртес уйăхлăх пырать

## Çĕнĕ çемье те йывăç лартрĕ



– Эрне каялла çемье çавăрчĕç те паян ял халăхĕпе пĕрле йывăç лартма тухрĕç. Тавралăха тирпей-илем кĕртес уйăхлăха ирттернĕ пекех вĕсен пурнăçĕ те илемлĕ-тату пултăрччĕ, – терĕ эпĕ пырса тухсан Çĕньял Хуракассинче пурте хисеплекен Александра Федоровна Анисимова. Çĕр-шыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн «Хисеп палли» орденпа наградăланнă тата 1991 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕнчеппе «Чăваш АССР ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» çак сăмахсемпе мана чăрăш лартакан Олесьăпа Алексей Васильевсем **(сăн ӳкерчĕкре)** патне ертсе пычĕ.

– Ялта пурăнатпăр. Ял халăхĕнчен иртмелле мар. Пурте кунта пулсан эпир мĕнрен кая вара? – ыйтуллăн тинкерчĕ кусран çамрăк мăшăр.

(Малалли 3-мĕш стр.)

Çур аки – 2012

## Вăрлăх имçамлаççĕ

Мĕн акатăн çавă шăтать. Çакна ăнланса пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче паян вăрлăх имçамлас тапхăр пырать. Çу уйăхĕн 2-мĕшĕ тĕлне районĕпе 235 тонна вăрлăх имçамланă. Ку ĕçсене «Свобода», «Колос», «Путь Ильича», «Восток», «Ударник», «ВаСем» хуçалăхсемпе В. Бархаткин хресчен (фермер) хуçалăхĕнче хальлĕхе ăнăçлăрах йĕркеленĕ.

Тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсем 4772 тонна (89 процент) çĕр улми вăрлăхне суйласа яровизацилеме кăларнă.

## Апатлантараççĕ

Хĕл каçнă нумай çул ӳсекен курăксемпе кĕрхи культурăсен калчисем паян минераллă удобренипе апатлантарса вăй парасса кĕтеççĕ. Хальлĕхе нумай çул ӳсекен курăксене 417 гектар (7 процент), кĕрхи культурăсене 167 гектар (7 процент) апатлантарнă. Нумай çул ӳсекен курăксен 1892 гектарĕ (32 процент) çинче сӳрелесе нӳрĕк тытнă. «Путь Ильича» агрофирмăра, «ВаСем» обществăра, «Колос» АПФ-ра, В. Бархаткинпа А. Пихтеров хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче ку ĕçе вĕçленĕ.

## Çĕртме сӳрелеççĕ

Ытти ĕçсемпе пĕрлех куллен вăй илсе пыракан çур акире мал ĕмĕтпе пурăнакансем çĕртме сухисене сӳрелес ĕçе кӳлĕнчĕç. Ĕнерхи кун тĕлне ăна 998 гектар çинче (24 процент) пурнăçланă.

## Çĕр хатĕрлеççĕ

Тĕрлĕ харпăрлăх формиллĕ хуçалăхсем çу уйăхĕн 2-мĕшĕ тĕлне çуртрисем акма 797 гектар (5 процент) çĕр хатĕрленĕ. Ку ĕçсем уйрăмах «Свобода», Суворов яч. хис., Ильич яч. хис. хуçалăхсемпе «Путь Ильича» агрофирмăра тата В. Бархаткин, А. Толстовпа А. Пихтеровăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче ăнăçлăрах пыраççĕ.

## Ака пуçланчĕ

Ака уйăхĕн вĕçĕнче «ВаСем» чикĕллĕ яваплăхлă обществăпа А. Пихтеровăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче ĕçлекенсем çуртрисем акма тухрĕç. Пĕрремĕшсем – 37 гектар, иккĕмĕшсем 13 гектар çурхи тулă акса хăварчĕç. Çавăн пекех иртнĕ кунсенче «Ударник» хуçалăхра 30 гектар, «ВаСем» обществăра 15 гектар урпа акма ĕлкĕрчĕç.

**А. БЕЛОВ хатĕрленĕ.**

Раççейре

## Ветерансене тав сăмахĕ калар

Раççей Почти Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçин ветеранĕсем патне РФ Президенчĕн салам çырăвĕсене çитерме пуçларĕ. Чăваш почтальонĕсем кăçал 37950 çыру валеçеççĕ.

Çырусене адресатсене алăран параççĕ. Вĕсене апрелĕн 30-мĕшĕ тĕлне валеçсе пĕтерме палăртаççĕ.

Ветерансене уйрăм çынсем те «Ентешсем тав тăваççĕ» акцие хутшăнса саламлама пултараççĕ. Салам открыткине почтăра туянмалла та хăвăртан ăшă сăмахсем хушса çырмалла. Почтальонсем ăна адресат патне вăхăтра çитерĕç.

Сывлăх сыхлавĕ

## Больничнăй – 15 кунлăх

Çапла палăртнă Раççей Федерацийĕн Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствин хушăвĕнче. Амбулатори мелĕпе сиплененекен чирлĕ çынна врач малтан вунă кунлăх панă больничнăй хутне хальхи йĕркепе календарьти 15 кунлăх пама пултарать. Больничнăй хутне «тăсассине» малтан врач хăй тĕллĕн йышăнма пултарнă пулсан халĕ – врачсен комиссийĕн ирĕкĕпе кăна.

Çĕнĕ йĕрке чирлĕ çынна нимĕнле пăтăрмах та тумасть. Çав вăхăтрах больничнăй хучĕсене парассине контрольлеме май парать. Медицина учрежденийĕсенче вара врачсен комиссине халĕ малтанхинчен икĕ хут ытларах пухма тивет. Сиплев учрежденийĕсем çак ĕçе меллĕ йĕркелеме пултарсан вĕсен те пăшăрханмалли сăлтав пулмалла мар.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Пенсисем

## Уяв кунĕсенче – маларах

Май уйăхĕнчи уяв кунĕсенче пенсисем çитерсе парассин графикĕсем улшăнаççĕ.

Почта çыхăнăвĕн уйрăмĕсем пенсисене çак графикпа параççĕ:

– майăн 3-мĕшĕнче – майăн 3–4-мĕшĕсенче илмеллисене;

– майăн 4-мĕшĕнче – майăн 5–6-мĕшĕсенче илмеллисене;

– майăн 5-мĕшĕнче – майăн 6–7-мĕшĕсенче илмеллисене;

– майăн 8-мĕшĕнче – майăн 8–9-мĕшĕсенче илмеллисене.

Перекет банкĕ пенсисене çак графикпа парать:

– майăн 2-мĕшĕнче – майăн 3–7-мĕшĕсенче илмеллисене;

– майăн 4-мĕшĕнче – майăн 8–11-мĕшĕсенче илмеллисене.

Перекет банкĕ укçа-тенкĕне пенсионерăн счечĕ çине куçарса парсанах пенсие илме май пур.

Майăн 10-мĕшĕнчен тытăнса пенсисене яланхи графикпа параççĕ.

**Н. СЕМЕНОВА,**
**Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ.**

Саламлатпăр



Юратнă мăшăра, аттене, асаттене, кукаçие – Калмăк ялĕнче пурăнакан **Евгений Васильевич ШИШОКИНА** 60 çулхи юбилей ячĕпе саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-çул сунатпăр. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ачисем, кинĕ, мăнукĕсем, тăванĕсем.**

Конкурс

## Муркаш хĕрĕ – "Чăваш пики – 2012"



Чăваш чĕлхин кунне халалласа Шупашкар хулинче "Чăваш пики – 2012" конкурс иртрĕ. Муркаш районĕн чысне Муркаш лицейĕнче вĕренекен Елена Порфирьева **(сăн ӳкерчĕкре)** ăнăçлă хӳтĕлерĕ.

Конкурса республикăри районсенчи вун виçĕ пике хутшăнчĕ. Тĕрлĕ енлĕ пултарулăхпа палăракан хĕрсем чăваш халăх йăли-йĕркине сăнларĕç, наци апат-çимĕçне хатĕрлес вăрттăнлăхпа, чăваш тумĕпе паллаштарчĕç, ытти енлĕ ăсталăха кăтартрĕç.

Çапах та Елена Порфирьева ыттисенчен хӳхĕмрех те пултаруллăрах курăнчĕ. Обществăлла ĕçре те, вĕренӳре те активлă пике конкурсăн кашни тапхăрĕнче чăннипех те çӳллĕ шайра пулчĕ. Конкурс йывăрлăхне çĕмĕллатма, Муркаш чысне хӳтĕлеме Еленăна хамăр ентешсем сахал мар пулăшрĕç. Кунта чи малтан "Расна" ушкăна ырăпа палăртмалла. Çавăн пекех Муркаш районĕн, районти ял тăрăхĕсем хушшинчи культура центрĕн, О. Афанасьева уйрăм предпринимателĕн "Ольга" парикмахерскийĕн тӳпи пысăк пулчĕ, вĕсем çĕнтерĕве палăрмаллах çывхартрĕç.

Асăннă конкурсра Муркашсем çулсеренех пултарулăхпа палăраççĕ, иртнĕ çул "Виçе – Чăваш пики – 2011" титула пирĕн район хĕрĕ Лариса Цветкова тивĕçнĕччĕ.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

Хушу

## Хастаррисене – ĕç ветеранĕн ятне

*ЧР Министрсен Кабинечĕ 2012 çулхи апрелĕн 24-мĕшĕнче 209-р № хушу кăларнă. Унпа килĕшӳллĕн республикăри граждансен татах тепĕр ушкăнне ĕç стажне кура «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ят панине çирĕплетнĕ. Вăл шутран Муркаш районĕнчен:*

Александрова Нина Васильевна (Йӳçкасси)
Александрова Феоктиста Алексеевна (Çатракасси)
Ананьева Раиса Петровна (Кораккасси)
Белова Нина Владимировна (Турикасси)
Васильев Афанасий Иосифович (Шурча)
Воронова Нина Васильевна (Анаткасси)
Грачева Анна Ивановна (Макаçи)
Григорьева Валентина Петровна (Тăмкасси)
Дмитриев Николай Никонорович (Оринин)
Евстафьева Нина Евстафьевна (Мăн Шаптак)
Иванова Алевтина Александровна (Вускасси)
Илларионова Валентина Илларионовна (Рыккакасси)
Кабуркина Нина Николаевна (Ойкас)
Кириллов Валерий Лазарьевич (Ойкас)
Косарева Зинаида Алексеевна (Шупуç)
Любимова Светлана Васильевна (Катькас)
Никитина Нина Ильинична (Кив Матьак)
Никитина Юлия Петровна (Карамалькасси)
Никольская Зинаида Федоровна (Кăпас)
Осипова Алевтина Германовна (Купăрля)
Перова Василиса Николаевна (Кăпас)
Прохорова Матрена Евстафьевна (Çĕмĕртлĕх Чемей)
Рябина Людмила Ильинична (Ахмане)
Семенова Галина Павловна (Шурча)
Сергеева Александра Семеновна (Çурлатри)
Серова Валентина Алексеевна (Катькас)
Сиротина Лидия Мироновна (Малиновка)
Соколова Юлия Серафимовна (Актай)
Сорокина Тамара Ивановна (Кӳстерек)
Сретинская Роза Ивановна (Çатракасси)
Степанов Анатолий Павлович (Отаркка)
Терентьев Василий Арсентьевич (Кăпас)
Терентьева Зоя Петровна (Кăпас)
Терентьева Лидия Михайловна (Кăпас)
Троицкая Нина Арсентьевна (Шуркасси)
Федоров Александр Федорович (Мăн Шаптак)
Ярдыкова Валентина Андреевна (Раккаш)

**Асăрхаттарни: «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ята тивĕçнĕ çӳлте асăннă граждансене удостоверенисене савăнăçлă лару-тăрура район администрацийĕнче майăн 5-мĕшĕнче 10 сехетре параççĕ.**

Аслӑ Ҫӗнтерӳ тунӑранпа 67 ҫул ҫитнӗ май

# Вӑл та ҫӗнтерӗве туптанӑ



Эсир сӑн ӳкерчӗкре 1909 ҫулхи майӑн 2-мӗшӗнче Тутаркасси уесне кӗрекен Туҫи Олкашра хресчен ҫемйинче ҫуралса ӳснӗ Трифон Трофимович Куликова куратӑр. Йышлӑ ҫемьере Трифон асли пулнӑ, ҫавна май унӑн ытларах тӑрӑшма лекнӗ, ыттисем вара – пӗринчен тепри пӗчӗк. Вӑл вӑхӑт пур енӗпе те йывӑр пулнӑран чылай ача шкулта вӗренме пултарайман. Пӗлӳ илессишӗн ҫунакан Трифон вара пурпӗрех сакӑр ҫулта шкул тенкелӗ ҫине ларать, тӑватӑ класс вӗренсе пӗтерет. Каярах унӑн ашшӗпе пӗрле тимӗрҫӗ лаҫҫинче ӗҫлеме тивет. Ҫул кайнӑҫем вӑл пӗлӗве ӳстерет, пӗр тапхӑр ачасене те вӗрентет.

...Ӗмӗрлӗхе асра юлмалли ир. Ерипен шуҫӑм тапранать, ӗҫре ӗшеннӗ совет халӑхӗ лӑпкӑн ҫывӑрать, пуҫланас кун – вырсарни кун. Чикӗри пограничниксем вара пӗр самант та тӗлӗрмеҫҫӗ, тӑван ҫӗре сыхлаҫҫӗ. Акӑ ӑнсӑртран тӳпере аякра темӗнле ҫутӑсем палӑраҫҫӗ. Пӗрин хыҫҫӑн тепри пирӗн чикӗ еннелле туртӑнаҫҫӗ, йышлӑ вӗҫен кайӑк карти тейӗн – питӗ нумай, шутласа кӑларма та ҫук. Кӗтмен ҫӗртен вӗсем часах умлӑ-хыҫлӑ ҫӗре кисретме пуҫлаҫҫӗ, унта-кунта вутҫулӑм алхасать, тӗтӗм-сӗрӗм ҫӳлелле улӑхать, мӗн пулса иртнине ӑнкарма та йывӑр. Ҫапла килнӗ 1941 ҫулхи июнӗн 22-мӗшӗ. Хӑрушӑ хыпар юланутпа ыткӑнчӗ тейӗн, пур ҫӗрте те вӑрҫӑ пуҫланни пирки каласрӗҫ. Ҫак кун вара кайӑксен савӑк сассисем те, урамра ача-пӑча кулли те илтӗнмерӗ, аслисем йӗни-ҫуйхашни хӑлхара тахҫанччен тӑчӗ. Таврари ешӗл йывӑҫ-курӑк вара шултӑра куҫҫульпе тайӑннӑн курӑнчӗ – ку вӑл ирхи сывлӑм-ха, ӑшшӑн вӗрекен ҫилӗ те ҫан-ҫурӑма самай ҫӳҫентерчӗ. Вӑййа тухнӑ ҫамрӑксем вара пурте килӗсене саланма ӗлкӗреймен-ха. Хӑш-пӗр хӗрпе каччӑ ҫак самантра юлашки хут пӗр пӗрин аллине тытса куҫран пӑхса сывпуллашу сӑмахӗ каларӗ. Ҫапах та ҫак тапхӑра сӑмахпа сӑнлама та хӗн – ҫак кунтан пӗтӗм пурнӑҫ улшӑнчӗ.

Шӑпа ытти арҫынсем пекех Трифон Трофимовича та вӑрҫӑ хирне илсе ҫитерет. Кунта вӑл ҫыхӑнтаруҫӑ ӗҫне пурнӑҫлать, ҫавӑн пекех ҫутӑпа тивӗҫтерекен агрегатсемпе ӗҫлет. Чи малтан вӑл ҫар ӗҫӗпе Калининра паллашать. Вӑрҫӑ вара пачах та шӳтлемест: юр ӑшӗнче ҫывӑрни те, ал-урана тӑм илсе яни те, канманран утнӑ чухне тӗлӗрсе кайни те пулнӑ тата ытти те. Пӗрре кӑна мар пӑрлӑ шыв урлӑ каҫма тӳрре килнӗ, ҫаксем йӑлтах унӑн сывлӑхне амантаҫҫӗ.

Уншӑн хӑрушӑ вӑрҫӑ Кенигсбергра вӗҫленет, кунта ытла та хӑрушӑ тытӑҫу пулса иртет. Ҫапах та "Катюшӑна" пула тӑшман тӗп пулать. Чи йывӑр операцисенчен пӗри вӑл Фашистла Германи тӗп хулине штурмлани пулнӑ. Икӗ эрне пыракан ҫапӑҫӑва виҫӗ миллион ытла салтак хутшӑннӑ. Берлин хулинчи ҫапӑҫу вара ҫичӗ куна тӑсӑлнӑ. Юлашки хирӗҫтӑру тӑшманшӑн пысӑк кӗтменлӗх пулнӑ. Тӑшман ҫулне ҫӗр алӑ прожектортан тӑракан калама ҫук пысӑк хӑватлӑ ҫутӑ пӳлет. Ҫак меллӗ самантпа усӑ курса пирӗн вӑй тӑшмана хирӗҫ тӑрать, тинех ӑна тӗп тӑвать.

– Ҫак самантра эпир пурте тӑван ҫӗр-шывшӑн кар тӑнипе тӑшмана аркатрӑмӑр, тӑшман тарҫи пулса пурӑнассинчен хӑтӑлтӑмӑр, – тесе палӑртнӑ паттӑр салтак хӑй аса илӗвӗнче.

Вӑрҫӑ хирӗнчи салтак тӑван ҫӗре хӳтӗлессишӗн, тӑшмана аркатассишӗн хӑйне шеллемест. Хӑюлӑхпа паттӑрлӑх кӑтартнӑшӑн Трифон Трофимович пилӗк медале тивӗҫет. Каярах вара мирлӗ пурнӑҫра хисеплӗ салтак тӗп механикра ӗҫлет, вӑрҫӑ хирӗнче кӑна мар ӗҫре те пултаруллӑхпа палӑрать. Анчах та хыҫа юлнӑ вӑрҫӑ мӗн пурнӑҫ вӗҫне тухиччен хӑй пирки аса илтерет. Паттӑр салтак 1979 ҫулта йывӑр сурансене пула ӗмӗрлӗхех куҫне хупать.

Ҫапла вара хӑрушӑ вӑрҫӑ нихӑҫан сипленеймӗ суран пулса тӑнӑ, пурӑнӑҫ пысӑк пайӗ тӗп пулнӑ. Вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗнисен хисепӗ ытла та хӑрушӑ: 27 миллион совет ҫыннин пурнӑҫӗ вӑхӑтсӑр таталнӑ, 1710 хула ҫӗрпе танлашнӑ...

Ыйту – хурав

# Билет туянас тесен

*– Чукун ҫул билечӗ тата авиабилет ӑҫта туянма май пур-ши?*

**Н. СЕМЕНОВА.**

Мӑн Сӗнтӗр.

– Билет туянас тесен почта ҫыхӑнӑвӗн кирек хӑш уйрӑмне пымалла кӑна. Сирӗн ыйтӑва татса парӗҫ. Тӗплӗрех информаци кирлӗ пулсан 62-2-54, 62-2-56 номерсемпе шӑнкӑравласа пӗлме пултаратӑр.

**Н. ПРАВДИНА,**
**Муркаш почтамчӗн пуҫлӑхӗ.**

Пенси ҫӑмӑллӑхӗсем

# Инкеке сирекенсем тимлӗхсӗр юлмӗҫ

***Радиаци катастрофисене сирес ӗҫе хутшӑннисене патшалӑх тӗрлӗ енлӗ пулӑшу мелӗсемпе тивӗҫтерет. Кусем вӗсем пенсисемпе социаллӑ тӳлевсем парассипе те пур. Пенси фончӗ урлӑ тӳлевсене республикӑри радиаци илнӗ 1300 ытла ҫын тивӗҫет. Ытларахӑшӗ вӗсенчен – Чернобыльти АЭС аварине пӗтерме хутшӑннӑ ҫынсем. Муркаш районӗ тӑрӑх кун пеккисем 19 ҫын.***

Радиаци аварийӗсене пула инкек тӳснисене пенси ҫӑмӑллӑхӗсемпе тивӗҫтерме пӑхнӑ. Акӑ «чернобылецсем» валли ватлӑха пула вӑхӑт ҫитмесӗрех пенсие кӑларассине, инвалидноҫа пула пенси пама пуҫӑнассине, ҫемьере тӑрантаракана ҫухатнипе ҫӑмӑллатнӑ условисемпе пенсие кӑларассине, кунпа пӗрлех икӗ пенси парассине тата уйрӑм условисене кура уйӑхсерен укҫан тӳлесе тӑрассине пӑхса хунӑ.

Пенсие тухассин вӑхӑтне чакарасси Чернобыльти АЭС катастрофине пӗтерме хутшӑннисен статусӗпе тӳррӗнех ҫыхӑннӑ. Сӑмахран, авари катастрофине пӗтересси ҫав зонӑра 1986–1987 ҫулсенче пулнисене 10 ҫул маларах, 1988–1990 ҫулсенче пулнисене 5 ҫул маларах пенси пама тытӑнаҫҫӗ. Чернобыль АЭС-ӗнчи аварие пӗтерме хутшӑнса ҫар тивӗҫне (служба тивӗҫне) пурнӑҫланӑ чухне аманса е чирлесе инвалида тухнӑ пулсан, вӑл икӗ пенси илме пултарать: ватлӑха пула ӗҫ пенсийӗ тата инвалидноҫа пула патшалӑх пенсийӗ. Енчен те Чернобыльти АЭС катастрофине пӗтерме хутшӑннӑ ҫын инвалида тухнӑ пулсан (мӗнле сӑлтавпа пулнине пӑхмасӑрах), вӑл уйӑхсерен укҫан парса тӑракан икӗ тӳлеве тивӗҫет: «чернобылец» пулнӑ майӗпе тата инвалидноҫ пирки.

**Н. СЕМЕНОВА,**
**Пенси фончӗн районти управленийӗн пуҫлӑхӗн ҫумӗ.**

# Чи пӗлтерӗшли – ҫынсен ыйтӑвӗсене тивӗҫтересси

Тӳрӗ лини

***Район хаҫачӗн редакцийӗ тӗрлӗ темӑсемпе вулакансемпе тӳрӗ лини ирттересси йӑлана кӗнӗ ӗнтӗ. Ҫакӑ пӗр-пӗрин хушшинчи ҫыхӑнӑва лайӑхлатма, тӗл пулакан ыйтусене оперативлӑ та тухӑҫлӑ татса пама пулӑшни никамшӑн та ик пӗлтерӗшлӗ мар. Акӑ нумаях пулмасть редакцире кун пек тӳрӗ лини федераллӑ почта ҫыхӑнӑвӗн Чӑваш Республикинчи управленийӗн Муркашри почтамчӗн пуҫлӑхӗпе Нина Правдинапа тата Чӑваш Республикинчи управленийӗн пресс-служби ертӳҫипе Оксана Ивановӑпа, пахалӑх управлени ушкӑнӗн ертӳҫипе Татьяна Антоновӑпа иртрӗ.***

Паллӑ ӗнтӗ, вулакансенчен ытларахӑшӗ почтальонсене вӗсен ҫӑмӑл мар ӗҫӗшӗн, хӑйсен тивӗҫне ответлӑха туйса пурнӑҫланӑшӑн тав сӑмахӗ калать. Вӗсем вара сахал мар пулни лайӑх кӑмӑл ҫуратать. Кун пек шӑнкӑравсемпе ҫырусем Юнкӑ ялӗнчи Ирина Матвеева, Муркашри Валентина Николаева, Хорнуй ялӗнчи Лидия Евдокимова, Куҫкин ялӗнчи Тамара Данилова почтальонкӑсем пирки пулчӗҫ.

**– Сирӗн операторсем пурнӑҫлакан ӗҫ калӑпӑшӗ пысӑк. Кусем вӗсем: таварсем те, услугӑсем те, тӳлевсем те. Бюрократи сахал мар: кредит тӳленӗ чухне бланкра питӗ нумай информаци ҫырмалла. Паспорт даннӑйӗсене кӑна кӑтартсан ҫитмест-и, калӑпӑр, хӑҫан тата ӑҫта ҫурални мӗн тума кирлӗ?**

*Оксана Иванова:* Операторсем пурнӑҫлакан ӗҫ калӑпӑшӗ чӑнах та пысӑк. Ку вӑл Муркашра кӑна ҫакӑн пек мар тата вӗҫӗмех те мар. Клиентсем уйрӑм кунсенче тата уйрӑм вӑхӑтсенче нумайрах. Ун пек чухне эпир ҫак ӗҫе ытларах оператора явӑҫтаратпӑр. Клиентсем нумай мар чухне вара вӗсен ыйтӑвӗсене операторсен сахалрах йышӗпех тивӗҫтерме май пур.

Бюрократизм пирки ҫавна каласшӑн. Раҫҫей почти Раҫҫей Федерацийӗн «Почта ҫыхӑнӑвӗ ҫинчен» Саккунпа, почта услугисемпе тивӗҫтерессин правилисемпе тата шалти инструкцисемпе килӗшӳллӗн услугӑсемпе тивӗҫтерет. Ку документсем почта ҫыхӑнӑвӗн ӗҫӗ-хӗлӗн пур енӗсемпе те ҫыхӑнса тӑраҫҫӗ. Вӗсене эпир ҫирӗп пурнӑҫласа пыма тивӗҫ.

**– Почтамтра та, почта ҫыхӑнӑвӗн уйрӑмӗсенче те тӗрлӗ тавар сахал мар сутаҫҫӗ. Кирлех-и ҫакӑ? Ку е вӑл тавара тупса илессипе хальхи вӑхӑтра йывӑрлӑх ҫук вӗт-ха?**

*Оксана Иванова:* Мӗншӗн тесен коммерци таварӗсемпе сутӑ тумасӑр паян Почта тытӑнса тӑраймасть. Паллӑ ӗнтӗ, почта ҫыхӑнӑвӗн услугисем те, подписка тата пенсисем ҫитерсе парасси те хальхи вӑхӑтра тӑкаклӑ пулса тӑраҫҫӗ. Ҫакна Раҫҫей Федерацийӗн Правительстви шайӗнче те палӑртнӑ. Пире валли вара асӑннӑ услугӑсен тарифӗсене шӑпах ӗнтӗ Правительство ҫирӗплетет. Патшалӑх палӑртнӑ тӑрӑх почта услугисем пӗтӗм Раҫҫей территорийӗнче пур граждансемшӗн те юрӑхлӑ пулмалла. Ҫавӑнпах ҫырӑва калӑпӑр Калининградран Сахалина ҫитерме клиентсем 15 тенкӗ тӳлеҫҫӗ е хӑйхаклӑхран сахалрах. Тӑкаксене саплаштарма тата малалла аталанма вара пирӗн укҫа-тенкӗ хамӑрӑн ӗҫлесе илме тивет. Ҫавӑнпа та коммерци услугисемпе тивӗҫтересӗр, тӗрлӗ таварпа сутӑ тумасӑр май ҫук.

Почта ҫыхӑнӑвӗн ялсенчи уйрӑмӗсем хуларисенчен кайра ан пулччӑр тетпӗр. Хальхи вӑхӑтра почта уйрӑмӗсенче ытларах ҫӗрте халӑха кирлӗ тавар кӑна мар, Интернет та пур, тӳлевсем те йышӑнаҫҫӗ, сӑн ӳкерчӗксем те пичетлеме пулать. Пурне те асӑнса та пӗтерес ҫук.

**– Оринин ял тӑрӑхне кӗрекен Лантӑш ялӗнче почтальонкӑсем пулса Дина Котельниковӑпа Альбина Астраханцева ӗҫлеҫҫӗ. Почтӑна эрнере икӗ кун – юн кунпа шӑмат кун кӑна валеҫеҫҫӗ. Хӑш чухне ку е вӑл издани килменни те пулкалать.**

*Нина Правдина:* Ыйтӑва татса панӑ темелле. Асӑннӑ почтальонкӑсене почтӑна вӑхӑтра валеҫмелли пирки асӑрхаттарнӑ, административлӑ майпа явап тыттарнӑ. Хаҫат-журнал ҫырӑнса илекенсем хӑйсен изданийӗсене малашне йӗркеллех илсе тӑма тытӑнӗҫ.

**– Ӗҫпе эпӗ тӑтӑшах командировкӑсене кайса ҫӳретӗп. Ман пата вара час-часах заказлӑ ҫырусемпе посылкӑсем килеҫҫӗ. Вӗсене вӑхӑтра илме пултараймастӑп. Мӗн тума май пур кун пек лару-тӑрура?**

*Татьяна Антонова:* Эсир ӑна почтӑра тытса усрамалли вӑхӑта тӑсма пултаратӑр. Ку тӳлевлӗ услуга шутланать. Кунсӑр пуҫне ҫырусемпе посылкӑсене илме хӑвӑрӑн представителе доверенноҫ та ҫырса пама май пур.

**– Манӑн хӗр Шупашкарта вӗренет. Унӑн адресӗпе вара Пенси фончӗпе налук инспекцийӗнчен ҫырусем килеҫҫӗ. Вӗсене почтальон мана памасть, юрамасть тесе ӑнлантарать, доверенноҫ илме хушать. Анчах та нотариус патӗнче доверенноҫ илме хаклӑрах. Урӑхла май ҫук-ши?**

*Татьяна Антонова:* Май пур. РФ Гражданла кодекспа килӗшӳллӗн корреспонденци илме ҫын ӗҫлекен е вӗренекен организаци, пурӑнакан вырӑнти пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе эксплуатаци организацийӗ панӑ доверенноҫ та нотариус ҫирӗплетнӗ доверенноҫпа пӗр вӑйрах шутланать.

Сирӗн хӗр халӗ пурӑнакан вырӑнти пурӑнмалли ҫурт-йӗрпе эксплуатаци организацийӗнче ҫул ҫитнӗ кирек хӑш ҫемье членӗ ячӗпе те, вӑл шутпа сирӗн ятпа та, доверенноҫ ҫыртарма пултарать. Доверенноҫа унӑн Муркаша ярса парас пулать. Ҫавна та ас тутарасшӑн: доверенноҫра унӑн хӑйӗн ячӗпе ҫырусем килекен почта ҫыхӑнӑвӗн уйрӑмӗн е унӑн индексне кӑтартмалла.

**– Эпир упӑшкапа уйрӑлни икӗ ҫул ӗнтӗ, вӑл Мускавра пурӑнать. Анчах та хӑш-пӗр чухне унӑн ячӗпе официаллӑ ҫырусем килеҫҫӗ. Ҫак ҫырусене ӑна ҫӗнӗ адреспа ярса пама почтӑра заявлени ҫырма май ҫук-и?**

*Татьяна Антонова:* Ун пек тума пулать. Анчах та адресатӑн, сирӗн малтанхи упӑшкан, почта ҫыхӑнӑвӗн уйрӑмне хӑйӗн пымалла та ҫырусене ҫӗнӗ адреспа ярса пама ыйтса почтамт пуҫлӑхӗ ячӗпе хушу (распоряжени) парса хӑвармалла. Унӑн тӗслӗхӗ кашни ҫыхӑну уйрӑмӗнчех пур. Почта сирӗн ҫыхӑну уйрӑмӗнчен ҫырусене тӳрех ҫӗнӗ адреспа ярса парӗ. Анчах та адресатӑн ҫырусене ҫӗнӗ адреспа ярса пама пӗр хут ятарлӑ тӳлев тата ҫӗнӗ адреспа илнӗ ҫырусем кашниншӗн уйрӑмшар тӳлемелле пулать.

Енчен те сирӗн малтанхи упӑшка ҫырусене ҫӗнӗ адреспа ярса парассине йӗркелеме килӗшмест пулсан, почтальона эсир адресат кунта пурӑнманни пирки пӗлтерӗр кӑна. Корреспонденцие ӑна яракана каялла тавӑрса парӗҫ.

**– Мана, пӗтӗмӗшле илсен, почта ӗҫӗ-хӗлӗ тивӗҫтерет. Анчах та хӑш чухне ыйтӑва вырӑнта татса парайман тӗслӗхсем те пулма пултараҫҫӗ. Калӑпӑр оператор компетентлӑхӗ пирки икӗленӳ ҫуралсан ӑҫта шӑнкӑравласа консультаци илме, пӗлтерме пулать?**

*Оксана Иванова:* Енчен те сире оператор хуравӗ тивӗҫтермест пулсан, ҫыхӑну уйрӑмӗн пуҫлӑхне чӗнме, унран хурав илме май пур. Енчен те пуҫлӑх та хӑш-пӗр ыйту ҫине хурав параймасть, ыйтӑва вырӑнта татса пама май ҫук пулсан вара УФПС почта ҫыхӑнӑвӗн эксплуатаци службине 62-00-52 номерпе е пахалӑх службине 62-60-37 номерпе шӑнкӑравлама пултаратӑр. Ҫавӑн пекех управленире талӑкӗпе ӗҫлекен 63-62-12 телефонпа та консультаци илме пулать.

**– Интернет-магазинран ман ятпа посылка килни пирки извещени илтӗм. Анчах паспорт ҫумра пулмарӗ, водитель удостоверенийӗпе май килет пулӗ терӗм. Почтӑра паспортсӑр пуҫне урӑх документ йышӑнмаҫҫӗ иккен. Тӗрӗс-и ҫакӑ?**

*Татьяна Антонова:* Почта ҫыхӑнӑвӗн услугисемпе тивӗҫтерессин правилисемпе килӗшӳллӗн почтӑпа килнӗ посылкӑсене адресатсене ҫын кам пулнине ҫирӗплетекен документпа кӑна пама тивӗҫ. Раҫҫей гражданӗсемшӗн ку вӑл – паспорт, чикӗ леш енне каймалли паспорт, ҫар билечӗ, моряк паспорчӗ е айӑпланакансене ирӗкрен хӑтарнӑ вырӑнтан панӑ справка, РФ Федераци Канашӗн членӗн е Патшалӑх Думин депутачӗн удостоверенийӗ.

Водитель прави вара – автомобильпе ҫӳреме ирӗк паракан документ. Почта ҫыхӑнӑвӗн ӗҫченӗсем унпа корреспонденци парса яма пултараймаҫҫӗ.

*Оксана Иванова:* Паянхи тӳрӗ лини калаҫӑвне хутшӑннисене пурне те пысӑк тав сӑмахӗ калатӑп. Почта ҫыхӑнӑвӗн ӗҫӗ-хӗлӗ пирки сирӗн шухӑш-кӑмӑлӑра пӗлме питех те кӑмӑллӑ пулчӗ. Юлашкинчен вара ҫавна каласа хӑварасшӑн. Раҫҫей почтин Чӑваш Республикинчи филиалӗ «Почта ҫыхӑнӑвӗн 2012 ҫулхи чи лайӑх уйрӑмӗ» конкурс ирттерет. Эсир ҫак ята тивӗҫ тесе шухӑшлакан почта ҫыхӑнӑвӗн уйрӑмне пӗлетӗр пулсан ун пирки пире ҫырса пӗлтерме е каласа пама пултаратӑр. Электронлӑ адрес: okivanova@mail.ru, почта адресӗ: 428022, Шупашкар хули, П. Валькевич тӑкӑрлӑкӗ, 1, «Почтовый экспресс». Сасӑлав 2012 ҫулхи сентябрӗн 1-мӗшӗччен пырать.

**В. ШАПОШНИКОВ**
**хатӗрленӗ.**

Районта тирпей-илем кĕртес уйăхлăх пырать

# Çĕнĕ çемье те йывăç лартрĕ



**(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)**

Чăваш Республикин Президенчĕ 7 çул каялла Йывăç кунне ирттерме йышăннине пурнăçласа районта çулленех анлă ĕçсем иртеççĕ. Кăçалхи çуркунне те çак ĕçсенчен катара юлмарĕ. Çатракасси ял тăрăхĕнче пурăнакансем вара çур аки пуçлансах кайиччен ку тĕлĕшпе çанă тавăрсах ĕçе кӳлĕнчĕç.

Йывăç лартас ĕçе те çак тăрăхра Çуркуннепе Ĕç уявне халалларĕç. Çĕньял Хуракассисемпе Çатракассисем хăйсен ялĕсене çыхăнтаракан çулăн икĕ хĕррипе 1,7 çухрăм чăрăш лартрĕç.

– Вырăнта пуçаруçăсем пулни ĕçе самай ансатлатрĕ. Ял пурнăçĕпе кăсăклансах тăракан Ю. Авиловпа ял тăрăхĕн депутачĕ Г. Яковлев халăха пĕр чăмăра пуçтарса ĕçлеттерни юлашки çулсенчи хĕл кунĕсенче самаях канăç паман ыйтăва татса пама май пачĕ. Тепĕр 3-4 çултанах кунти çула юр шăлса лартмасси куçкĕрет, – терĕ ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю. Кожевников.

Кашмашпа Шурчана асфальт çулпа çыхăнтарни Шурчапа Ярапайкасси енче пурăнакансене район центрне тӳрĕ çул уçса панине ку тăрăхра пурăнакансем ырласа йышăннăччĕ. Хĕл кунĕсенче Хуракасси выçăлккипе Кашмаш хушшинчи çула час-часах юр тарăн хӳсе лартни çĕр-çĕр çыншăн пысăк ыйтуччĕ. Кăçал ăна татса пама ял тăрăхĕ йывăç хунавĕсем туянса пачĕ тата вĕсене лартма çĕр хатĕрлерĕ. Çу уйăхĕн 1-мĕшĕнче çак ыйтăва вĕçне çитерме май килчĕ. Кашмашсемпе Хуракасси выççăлккисем тата Кашмашри пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулта вĕренекенсемпе ĕçлекенсем пĕр йыша пуçтарăнса çул хĕррипе 1,3 километр йывăç лартрĕç.

Йывăç лартассипе тăрăшса ĕçлекенсем патне çак кун район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев та çитрĕ. Ростислав Николаевич ял çыннисене тăрăшулăх кăтартнăшăн, 3-9 классенче пĕлӳ пухакан шкул ачисене тăван тавралăха юратнăшăн тав сăмахĕ каларĕ.

Ялта пурăнакансемпе шкул ачисемсĕр пуçне йывăç лартма Çуркуннепе Ĕç уявне хуларан канма килнисем те активлă хутшăнчĕç.

– Ялтан тухса кайни 20 çул çитет ĕнтĕ. Çак хушăра хама йывăç лартман тесе каламастăп. Паян вара ял халăхĕпе пĕрле çак ĕçе хутшăннине хамшăн уяв тесех йышăнатăп. Хваттерĕ пур, ачи-пăчи ӳсет, халĕ, акă, йывăç лартрăм, – терĕ çăка хунавĕн тымарне тăпрапа картланă май Анатолий Петров.

Сăмахăма вара Çĕньял Хуракассинче пурăнакан ĕç ветеранĕ В. Якимов хăйĕн мăнукĕпе черетлĕ йывăç лартнă хыççăн каланипе вĕçлес килет:

– Эпир пурнăçланă кашни ĕç вăл хамăр ачасемпе мăнуксемшĕн. Вĕсен çулĕсене юр ан хӳтĕрччĕ. Кĕр çитсен вара пĕрле пулса çак йывăçсем хушшинче кăмпара çӳресчĕ.

Çапла пултăр. Ĕмĕтленни çитсе пытăр!

...Таврара çут çанталăкăн чи илемлĕ вăхăчĕ. Тăван ен чечексен ытамне путнипе пĕрлех çывăхри вăрмансемпе ĕшнесем кайăксен илемлĕ юррипе тулчĕç. Çу уйăхĕн 1-мĕшĕнче Çĕньял Хуракассисемпе Çатракассисем, Хуракасси выççăлккисемпе Кашмашсем лартнă йывăçсем çинче те çитес çулсенче кайăксен оркестрĕ тавралăха илем кӳрĕ. Ыттисем те уйăхлăха активлă хутшăнса йывăçсем нумайрах лартар, хамăр тăван ене хăтлăрах тăвар, тирпейлĕхе мала кăларар!

**А. БЕЛОВ,**
**Çатракасси ял тăрăхĕн депутачĕ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Ю. Авиловпа Г. Яковлев Çĕньял Хуракассипе Çатракасси ялĕсем хушшинче йывăç лартассишĕн яваплă пулчĕç.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕсем.**

Халăх хорĕ 65 çул тултарнă май

# Хастар ветерансем халĕ те стройра

Кăçал Ярапайкасси ял тăрăхĕнче пурăнакансем кунта йĕркеленĕ хор 65 çул тултарнине паллă тăваççĕ. Çак уяв – çакăнта çуралса ӳснĕ çынсен уявĕ. Мĕншĕн тесен вĕсенчен чылайăшĕ çамрăклăх çулĕсенче çак хорта юрласа çынсене савăнтарнă, хаваслă кăмăл-туйăм парнеленĕ.

Хора йĕркелекенĕ, ертсе пыраканĕ вара А. Константинов пулнă. Муркашра çуралса ӳснĕ Александр Кузьмич хăй ĕмĕрне Ярапайкассинче ĕçлесе ирттернĕ, кунтах çемьеленнĕ, 5 ача пăхса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă.

Çăмăл пулман унăн шăпи. Тин çеç учитель профессине алла илнĕ çамрăк фронта лекет. Вăрçă нушине пайтах астивнĕ, пĕрре мар вилĕме куçран пăхнă.

Мирлĕ ĕçре те хастар пулнă вăл. Ĕмĕрĕпех шкулта ачасене метематика предметне вĕрентнĕ. Обществăлла ĕçсене те хастар хутшăннă. Уçă кăмăллă, шӳте-кулла пултаракан, юрра-кĕвве маçтăр çын патне пурте туртăннă.

Александр Кузьмич 1947 çулта Ярапайкасси клубĕ çумĕнче хор йĕркелесе ярать. Сцена çине 30–40 çынлă коллектив тухса юрласа ярсан камăн чунĕ савăнмасăр тăнă-ши? А. Константиновăн вĕренекенĕсем, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем каçсерен клуба пухăнса репетицисем ирттернĕ, тĕрлĕрен юрă вĕреннĕ. Çывăхра концертсемпе çитмен ял юлман темелле. «Концертсемпе çӳре-çӳрех хĕрсене качча параттăмăр. Сцена çинчи хӳхĕм пикесене кӳршĕ ял каччисем куç хыватчĕç», – тетчĕ вăл.

Вăйлă, илемлĕ пулнă хор коллективĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Чăваш Енри хорсен смотрĕнче 1-мĕш вырăн йышăннă, 1948 çулта Чăваш çĕрĕ ячĕпе Мускава кайма тивĕçнĕ. «Мускав тăрăх шупăрпа, ума ама çакнипех утаттăмăр. Пур çĕрте те пире хапăл туса кĕтсе илетчĕç. Метропа е ытти транспортпа кайнă чухне нихăçан та укçа тӳлеттерместчĕç», – аса илетчĕ вăл вăхăта И. Ядыкова.

Унтанпа пайтах вăхăт иртрĕ. А. Константинов пирĕнтен уйрăлса кайни те чылай ĕнтĕ. Хор коллективĕн хастарĕсенчен те чылайăшĕ çук. Анчах та пурăнакансем вĕсене манмаççĕ.

Çак кунсенче Культура çурчĕ кĕрлесе тăчĕ кăна. Унта хор ветеранĕсем репетици ирттереççĕ. Ялтисем çеç мар, çак тăрăхри хулара тĕпленнĕ çынсем те килнĕ кунта. Акă мĕн каласа парать Ф. Петрова: «Хора юрлама пымалла тенине илтсен хĕпĕртесе кайрăм. Çамрăклăха тепĕр хут таврăннă пек туятăп хама. Эпĕ хорта 1953 çултанпа юрланă вĕтха».

Л. Гаврилова вара 1951 çулта юрлама çӳреме тытăннă. 1978 çултанпа хулара пурăнать. Сувенирсене илемлетекен художник пулса ĕçленĕ хушăрах Орлов-Шуçăм ертсе пыракан халăх хорĕнче те юрланă. «Александр Кузьмич пире юрлама вĕрентрĕ. Тавах ăна. Савăнăçра та, хурлăхра та юрă юнашар пулчĕ», – тет вăл халĕ.

Хор ветеранĕсем шутĕнче В. Дмитриева, Р. Константинова, В. Егоров, Л. Лоцманова, М. Паргеева, П. Сорокин, Р. Скворцова, З. Волкова, Т. Горшкова, З. Герасимова, Ф. Петрова тата ыттисем те. Каçарчăр мана ыттисем пурин хушаматне те асăнманшăн. Ăна валли хаçатра майĕ те çук.

Йывăр саманара иртнĕ вĕсен çамрăклăхĕ, ĕçре курнă хăйсен телейне. Çав хушăрах чĕререн савăнма, илеме курма та пĕлнĕ вĕсем. Вăрăм ĕмĕрлĕ пулăр, çирĕп сывлăх сире, ветерансем.

«Вĕсем илемлĕ юрланинчен хам та тĕлĕнсе, савăнса кăна тăратăп», – тет В. Романов. Вăл – А. Константинов ĕçне малалла тăсаканĕ. Ярапайкассинчи Культура çурчĕ çумĕнчи халĕ вăл ертсе пыракан «Екрем» халăх фольклор ушкăнне таврара пĕлмен çын çук та пулĕ.

Ака уйăхĕн 27-мĕшĕнче хор ветеранĕсем Ярапайкассинчи Культура çуртĕнче концерт кăтартрĕç. Пурте кăмăллă юлчĕç вĕсен пултарулăхĕпе. Апла пулсан ветерансем стройрах-ха.

**Н. ВАСИЛЬЕВА.**

Е.А. Андреев çуралнăранпа 100 çул çитнĕ май

# Чаплă ентешĕмĕр çинчен пĕрле аса илер

2012 çул – Раççейре истори çулталăкĕ. Историри паллă пулăмсем пирĕн районта та пулман мар. Вĕсенчен пĕри – Шурча вăрçи – пулнăранпа кăçал 170 çул çитет. Район шайĕнче ăна майăн 31-мĕшĕнче паллă тăваççĕ. Унччен маларах вара апрелĕн 25-мĕшĕнче район историйĕнче паллă йĕр хăварнă тепĕр маттур Муркаш Ен ывăлĕ Социализмла Ĕç Геройĕ Е. Андреев çуралнăранпа 100 çул çитет. Паян ун ячĕпе хисепленсе тăракан колхоз вăл ертсе пынă вăхăтра республикăра чи ырă ятлисенчен пĕри пулнине пĕлмен çын сахал пулĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ çумĕнчи Обществăлла канашăн пĕрремĕш ларăвĕнче пăхса тухнă тĕп ыйтусенчен пĕрисем пулчĕç çак ыйтусем. Иртнĕ эрнере вара Евтихий Андреевичăн юбилейне хатĕрленсе ирттерессипе туса хунă йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕнче тата тепĕр хут тĕплĕн пăхса тухрĕç ку ыйтăва. Унта çакна палăртрĕç. Паллă ентешĕн юбилейне хăй çуралнă кун – апрелĕн 25-мĕшĕнче – ирттереççĕ районта. Унтан маларах вара республикăра Чăваш ял хуçалăх академийĕнче Евтихий Андреевичăн пурнăçĕпе пултарулăхне халалласа наукăпа практика конференцийĕ иртет. Ку ыйтупа та республикăра ятарлă йĕркелӳ комитечĕ ĕçлет. «Е. Андреевăн юбилейне çӳллĕ шайра хатĕрленсе ирттермелле. Вăл ăна тивĕçлĕ», – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ, асăннă канашпа йĕркелӳ комитечĕн председателĕ Р. Тимофеев.

Сăмаха малалла тăсиччен паллă ентешĕмĕр çинчен сăмахăмăр.

Е. Андреев 1912 çулхи апрелĕн 25-мĕшĕнче Етĕрне уесне кĕрекен Турай вулăсĕнчи Варпуç ялĕнче çуралнă. 1927 çулта Аслă Чурашри ялти çамрăксен шкулĕнче 6 класс пĕтернĕ. 1930 çулта «Сеятель» колхоза кĕрет. Тепĕр çулхи январь уйăхĕнче вара ăна счетовода лартаççĕ. Карахпа 1932 çулхи март уйăхĕнчен пуçласа октябрьччен райколхозсоюз инструкторĕ пулса тăрать. 1930 çулхи март уйăхĕнче пултаруллă та пуçаруллă комсомолеца «Сеятель» хуçалăх правленийĕн председательне суйлаççĕ. Çулталăк çурă хуçалăха ертсе пынă хыççăн Хĕрлĕ Çара каять. Унтан таврăннă хыççăн 1935 çулхи февральтен пуçласа каллех хуçалăх тилхепине алла илет. 1938 çулхи ноябрь уйхĕнче Евтихий Андреевич Сĕнтĕрти вăрман хуçалхне ĕçлеме куçать. Кунта вăл 1940 çулхи январьччен вăрман хатĕрленĕ çĕрте прораб пулса ĕçлет. Ун хыççăн 1941 çулхи январь уйăхĕччен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи вырăнти топливо промышленноçĕн районсенчи вăрман хатĕрлекенсен управленийĕн директорĕ пулса тăрать.

Евтихий Андреевич 1940 çултанпа – ВКП(б) членĕ. 1941 çулта шăпа каллех ăна тăван «Сеятель» хуçалăха илсе çитернĕ. Çак çулхи январь уйăхĕнчен пуçласа каллех хуçалăха ертсе пыма пуçлать. Мĕнпур ĕмĕте вăрçă татнă. Совет Çарĕнче Е. Андреев – уйрăм командирĕ, рота политрукĕн тивĕçĕсене пурнăçлаканĕ, взвод командирĕн пулăшаканĕ, рота старшини. Вăрçă хыççăн Евтихий Андреевича Мускав Çар округĕн рабочисен 324-мĕш уйрăм батальон парторгĕ пулма куçараççĕ.

1946 çулхи август уйăхĕнче Е. Андреев Муркаш районĕпе ĕçлекен СССР Хатĕрлев министерствин уполномоченнăйĕ пулса тăрать. Ку ĕçре вăл 1951 çулхи февраль уйăхĕччен тăрăшать.

1950-1951 çулсенче республкăра пĕчĕк колхозсене пĕрлештерес юхăм пуçланнă. Муркашра та 5 хуçалăха пĕрлештерсе «Знамя труда» хуçалăх туса хураççĕ. КПСС райкомĕ çак пысăклатнă хуçалăх ертӳçи пулма Е. Андреева сĕнет.

Евтихий Андреевич ĕçе кӳлĕннĕ тапхăрта çур аки ирттерме вăрлăх та çитмен, колхоз кассинче вара пĕр пус та пулман. Мĕн тăвас – патшалăхран кивçен илме тивнĕ.

Е. Андреев «Знамя труда» хуçалăха 30 çул ытла ертсе пырать: 1981 çулхи июнь уйăхĕччен. Мĕн виличчен çак ĕçре пулнă вăл. Колхоза малта пыракан хуçалăхсен ретне туртса кăларать. «Знамя труда» хуçалăх республикăра ытти хуçалăхсемшĕн тĕслĕх пулса тăрать.

Çакна çирĕплетекен пĕр-ик тĕслĕх илсе кăтартни вырăнлах кунта. 1980 çулта колхоз 2979 центнер аш-какай туса илнĕ. Урăхла каласан, кашни 100 гектар çĕр пуçне 135 центнер аш, 300 центнер сĕт туса илнĕ. Евтихий Андреевич хуçалăхра сысна ĕрчетессине аталантарса ярать. Хуçалăха килекен укçа-тенкĕрен 25-30 процентĕ шăпах çак отрасльте тунă укçа пулнă. Е. Андреев ертсе пыракан хуçалăх вăл вăхăтра республикăра апат перекетлесе сыснасене нумай ӳт хуштарнипе чапа тухнă.

Ял хуçалăх поизводствине аталантарас ĕçри пысăк çитĕнӳсемшĕн Е. Андреева 1966 çулта Социализмла Ĕç Геройĕ ятне панă. Ленин, Октябрь Революцийĕн, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе, медальсемпе наградланă. Евтихий Андреевич вилнĕ хыççăн вăл ертсе пынă хуçалăха 1981 çулта Социализмла Ĕç Геройĕн ятне панă.

Çакна палăртмалла. Районта мухтавлă ентешĕмĕрĕн 100 çулхи юбилейне паллă туса ирттерме ятарлă ĕç планĕ хатĕрленĕ. Унпа килĕшӳллĕн хатĕрленӳ ĕçĕсем малалла пыраççĕ. Йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕнче район адмнистрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев чи малтанах республикăра иртекен наукăпа практика конференцийĕ çинче чарăнчĕ. Унта Евтихий Андреевича çывăх пĕлекен, нумай çул КПСС райкомĕн 1 секретарĕнче ĕçленĕ Муркаш районĕн Хисеплĕ çынни В. Краснов тухса калаççан вырăнлă пулать тесе йышăнчĕç, доклад Евтихий Андреевич пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен калакан слайдсемпе пулать. Ларура паллă ентешĕмĕрпе çыхăннă историлле документсене тупса пухассипе район архивĕ, ял тăрăхĕсем хушшинчи библиотека, районти тури чăвашсен музейĕн ĕçченĕсем ĕçлĕç. Юбилей тĕлне тури чăвашсен музейĕнче Евтихий Андреевич çинчен каласа паракан ятарлă экспозици уçăлмалла. Историлле документсем тенĕрен, ку енĕпе Е. Андреевăн хĕрĕ Валентна Евтихеевна çемье архивĕнчи документсемпе, сăн ӳкерчĕксемпе пулăшма пулчĕ. «Атте юбилейне çемьепе тата çывăх çынсемпе ирттерме шутланăччĕ малтан. Пирĕн çывăх çыннăмăра манманшăн, ăна çапла район, республика шайĕнче чысланăшăн район администрацине тав тăватпăр», – терĕ вăл Обществăлла канашăн ларăвĕнче.

Йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕнче Е. Андреев юбилейне районти ял тăрăхĕсем хушшинчи Культурăпа кану центрĕнче ирттерме палăртрĕç. Унта районти ял хуçалăх, хресчен (фермер) хуçалăхĕсен ертӳçисем, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем, ял-йыш, çавăн пекех Евтихий Андреевичпа пĕр вăхăтра ĕçленĕ, ăна лайăх пĕлекенсем те пулĕç. Юбилей кунĕ тĕлне ятарлă медаль те хатĕрлеме палăртрĕç. Çавăн пекех ларура Евтихий Андреевичăн вил тăпри çывăхĕнчи ӳссе кайнă йывăççене касса тирпейлеме те палăртрĕç. Район хаçатĕнче те, район администрацийĕн, ял тăрăхĕн администрацийĕн сайчĕсенче Е. Андреев çинчен асилӳсем кăлармаллине, район центрĕнче ятарлă баннер лартма йышăнса хăварчĕç. Апла пулсан Евтихий Андреевича çывăх пĕлнĕ çынсене хăйсен асилĕвĕсемпе паллаштарма ыйтатпăр. Е. Андреев ячĕллĕ хуçалăх ĕçченĕсем вара çак кун тĕлне çурхи ака-суха ĕçĕсене вĕçлесе ăна пĕтĕмлетме палăртаççĕ.

**Л. ПАВЛОВА.**

# Пĕрремĕш ăмăрту, пĕрремĕш çĕнтерӳçĕсем

## Районта çуллахи спорт сезонĕ уçăлчĕ



Майăн 1-мĕшĕнче Муркашсем Çуркуннепе Ĕç уявне уявланипе пĕрлех спорт уявне те паллă турĕç, çуллахи спорт сезонне уçрĕç. Çак кун Муркашра йăлана кĕнĕ ăмăрту иртрĕ – Муркаш райповĕн кубокĕсене çĕнсе илессишĕн çăмăл атлетсем старта тухрĕç. Кăçалхипе асăннă ăмăрту саккăрмĕш хут иртрĕ.

Уява ачасен Муркашри искусство шкулĕн хореографи ушкăнĕ илем кӳчĕ. Вĕсен ташшисем спортсменсене çĕнтерӳ тума хавхалантарчĕç.

Спорт уявне районти çăмăл атлетика федерацийĕн председателĕ, Муркаш райпо канашĕн председателĕ Б. Андреев уçрĕ, спорт тата майăн 1-мĕшĕн уявĕсем ячĕпе саламланă май старта тухакансене дистанцисенче ăнăçусем сунчĕ. Пухăннисене çавăн пекех район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, ЧР тĕп патшалăх инженер-инспекторĕ В. Димитриев, республика Патшалăх Канашĕн депутачĕ Н. Ванеркин, «Единая Россия» партин Муркаш районĕнчи уйрăмĕн политканашĕн секретарĕ Ю. Иванов, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Никитин саламларĕç, ăнăçусем, ӳсĕмсем сунчĕç.

Малтанах çемье командисем старта тухрĕç. Иртнĕ çулхи пекех Хорнуй ял тăрăхĕнчи Васильевсен çемйине çитекенсем пулмарĕç. Иккĕмĕшпе виççĕмĕшсем – Муркаш ял тăрăхĕнчи Лоцмановсемпе Йӳçкасси ял тăрăхĕнчи Романовсен çемье командисем.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан тĕп шкулсен командисем старта иккĕмĕш тухрĕç. Кунта Шетмĕпуçсем палăрчĕç, Муркаш райповĕн кубокне тивĕçрĕç. Шомик тата Сосновка шкулĕсен командисем иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене йышăнчĕç.

Пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкулсем хушшинче Калайкассисем ырă ята тивĕçлĕ. Вĕсен командисем пĕр харăсах призлă икĕ вырăн – пĕрремĕшпе виççĕмĕш вырăнсене йышăнма пултарчĕç. Ярапайкасси шкулĕн команди иккĕмĕш пулчĕ.

Предприятисемпе организацисен командисем хушшинче «Свобода» ял хуçалăх предприятийĕн команди финишра пĕрремĕш пулчĕ. Шалти ĕçсен министерствин Муркаш районĕнчи пайĕпе Муркаш райповĕн командисем иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене тухрĕç.

Ăмăртура ветерансем те хăвăрт чупассипе вăй виçрĕç. Владимир Иванов мала тухма пултарчĕ, Бослислав Васильевпа Анатолий Люцева хăй хыçне хăварчĕ.

Спорт ветеранĕ Тамара Александрова тата ăмăртăва хутшăнакансенчен чи çамрăкки Карина Уткина парне сертификачĕсене тивĕçрĕç.

Çуллахи спорт сезонĕ уçăлчĕ. Умра – çĕнĕ спорт уявĕсем, çĕнĕ çитĕнӳсем. Апла пулсан çитес ăмăртусемччен!

**Н. ГРИГОРЬЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: дистанцисенче хĕрӳ кĕрешӳ пычĕ.**

**Н. ПАВЛОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Тав тăватпăр

Пирĕн хисеплĕ тăвана, ырă çыннăмăра Эльвира Федоровна Ивановăна ваттисен йĕркипе леш тĕнчене тивĕçлĕ ăсатма пулăшнăшăн, хуйха пирĕнпе пĕрле пайланăшăн Муркаш район администрацине, социаллă хӳтлĕх пайне, Пенси фончĕн районти уйрăмне, хĕрарăмсен канашне, ветерансен канашне, ял-йыша, пур тăван-пĕтене чĕререн тав тăватпăр.

**Тăванĕсем.**

Пирĕн юратнă ывăла – Муркаш ялĕнче пурăннă Владимир Вячеславович Киселева юлашки çула ăсатма пулăшнăшăн, калама çук пысăк хуйха тата çухатăва пирĕнпе пĕрле пайланăшăн «Сывлăх» физкультурăпа спорт комплексĕн, ачасемпе çамрăксен В. Егорова ячĕпе хисепленекен спорт шкулĕн, Муркашри пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕн, районти тĕп больница коллективĕсене, Муркашри Куликовсен, Романовсен, Яковлевсен, Ивановсен, Кашмашри Григорьевсен çемйисене, пĕтĕм тăвана, ялйыша, пускилсене, тус-юлташсене чĕререн тухакан пысăк тав сăмахĕ калатпăр.

**Киселевсен çемйи.**

Унтанпа вăхăчĕ самай иртрĕ ĕнтĕ, манăн йывăр хуйхă суранĕ вара иртмен-ха. Сивĕ хĕл кунĕнче пушар тухрĕ, вут-çулăм хытă алхаснипе пурăнмалли хваттер юрăхсăра тухрĕ. Юрать-ха, пурлăха маларах "Поддержка" патшалăхăн страхлакан компанийĕнче страхларăм. Çавна май асăннă компани манăн шанăçа тӳрре кăларчĕ, пушар хыççăн кĕске вăхăтрах вут-çулăмра çухатнă пурлăхăн страхланă пайне тӳлесе татса йывăрлăхра пулăшрĕ. Çакăнта манăн чи малтан страхлакан компанин Муркашри представительстви пуçлăхне Фаина Валентиновна Кирпичниковăна ырăпа палăртас килет. "Поддержка" компанийĕн ĕçĕсем яланах ăнса пычччăр. Çавăн пекех хамăр çывăхри ялсенче пурăнакансем укçан парса пулăшрĕç, вĕсене те мана йывăрлăхра пулăшнăшăн, манăн хуйха-суйха ăнланнăшăн пысăк тав сăмахĕ калас килет.

**Н. Антонова.**

## Объявления


**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя, срок изготовления от 3 до 5 дней. Кредит, рассрочка, скидка до 35%, пенсионерам дополнительная скидка. Замер и доставка бесплатно. Прием заказов: с. Моргауши, ул. Гагарина, 16А (здание котельной). Тел.: 8-917-662-71-65, 8-917-655-96-77 4-4.**

**Открылся магазин «Секонд-хенд» (комиссионка). Детская, мужская, женская одежда. Цены от 30 руб. Адрес: с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 25 (территория агропромснаба). График работы с 8 до 17 часов, воскресенье – выходной. Тел.: 8-919-653-15-95.**

**Хĕрлĕ-шурă тынашки сутатăп. Тел.: 8-919-670-50-15, 60-1-39.**

* * *

**Продаю трактор Т-30 2000 г.в., сажалку, плуг, культиватор, косилку, сеялку, трактор Т-16; семена картофеля, горох, пшеницу и рожь. Тел.: 8-927-847-20-55, 8-952-021-75-90.**

* * *

**Продается черно-пестрая корова, пятый отел. Срок – 3 июня. Адрес: д. Шупоси, ул. Центральная, д. 38. Тел.: 8-937-370-54-48.**

* * *

**Июль уйăхĕнче виççĕмĕш пăруламалли хĕрлĕ-шурă тĕслĕ ĕне сутатпăр. Тел.: 8-906-383-25-94.**

* * *

**Ĕнесем, вăкăр, тына, пăрусем, сурăхсем туянатпăр. Тел.: 8-987-665-02-13. 1-2.**

* * *

**Çĕр улми вăрлăхĕ («рамона», «удача»), тăваткал тюкри утă сутатпăр. Тел.: 8-905-199-61-77. 3-5.**

* * *

**Декабрь уйăхĕнче пĕрремĕш пăруламалли хура-шурă тынашки сутатпăр. Тел.: 8-927-852-14-90.**

* * *

**Магазин «Сельхоззапчасти» реализует: запасные части к тракторам и сельхозагрегатам. Адрес: д. Юнгапоси. Тел.: 8-937-372-02-15, 8-927-859-69-93. 9-16.**

* * *

**Сентябрь уйăхĕнче пĕрремĕш пăруламалли хурашурă тынашки сутатпăр. Тел.: 8-960-303-70-48.**


**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:021001:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиком проекта межевания является: Трофимова Валентина Вячеславовна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Ильинское сельское поселение, д. Ойкасы, ул. Центральная, д. 38.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, тел.: 63-4-39. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:021001:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Хлебороб», земельный участок расположен в северной части кадастрового квартала 21:17:021001.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:200701:316, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Иванов Михаил Илларионович, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, с. Тораево, ул. Кирова, д. 24. Иванова Людмила Николаевна, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Тораевское сельское поселение, с. Тораево, ул. Кирова, д. 24.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, тел.: 63-4-39. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:200701:316. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК им. Кирова, земельный участок расположен в юго-западной части кадастрового квартала 21:17:200201.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

* * *

**ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА**

Настоящим извещением уведомляем участников долевой собственности на земельный участок с кадастровым номером 21:17:101601:780, о месте и порядке ознакомления с проектом межевания земельного участка, образованного в счет земельной доли. Предметом согласования являются размер и местоположение границ выделяемого земельного участка.

Заказчиками проекта межевания являются: Колбасов Мефодий Михайлович, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Сендимир, ул. Сендимирская, д. 20. Колбасов Николай Яковлевич, адрес: Чувашская Республика, Моргаушский район, Орининское сельское поселение, д. Сендимир, ул. Сендимирская, д. 18.

Проект межевания земельных участков подготовлен кадастровым инженером Николаевым А.В., номер квалификационного аттестата 21-11-68. Почтовый адрес и адрес электронной почты, по которым осуществляется связь с кадастровым инженером: 429530, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5, тел.: 63-4-39. E-mail:arshin21@yandex.ru

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:17:101601:780. Адрес местоположения: Чувашская Республика, Моргаушский район, территория землепользования СХПК «Оринино», земельный участок расположен в южной части кадастрового квартала 21:17:092701.

С проектом межевания земельных участков можно ознакомиться по адресу:429530, Россия, Чувашская Республика, Моргаушский район, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

Обоснованные возражения после ознакомления с проектом межевания относительно размера и местоположения границ земельных участков принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: 429530, Чувашская Республика, с. Моргауши, ул. Ленина, д. 41/5.

## Пĕлтерӳсем. Объявления


**Требуется водитель на КамАЗ с категорией Е. Тел.: 38-51-75, 8-927-66-85-175. 5-5.**

Торговый Комплекс "ТЕРМИНАЛ"
**КИРПИЧ**
**ГАЗОБЕТОН / ГАЗОСИЛИКАТ**
**более 500 видов**
Тел: (8352) 30-55-10, 73-84-12 www.terminaltk.ru
ЧР, г. Чебоксары, Канашское шоссе, 7/1
ВСЕГДА НИЗКИЕ ЦЕНЫ


Отдел образования, молодежной политики, физической культуры и спорта администрации Моргаушского района выражает глубокое соболезнование Мироновой И.Ю. по поводу кончины **ОТЦА.**

ООО «Управляющая компания ЖКХ» Моргаушского района выражает глубокое соболезнование работнику МУП ЖКХ «Моргаушское» Купцову В.А. в связи с тяжелой утратой – смертью жены **КУПЦОВОЙ Светланы Александровны.**

Муркаш райпо коллективĕ «Радуга» кафере официантка пулса ĕçлекен Н.П. Киселевăн мăшăрĕ **Владимир Вячеславович КИСЕЛЕВ** вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркаш райпо коллективĕ кунта аслă кондитерта ĕçлекен Л.А. Скворцовăн **ШĂЛЛĔ** вăхăтсăр вилсе кайнă пирки унăн тăванĕсемпе тата çывăх çыннисемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Муркашри вăтам шкул коллективĕ кунта акăлчан чĕлхине вĕрентекен З.П. Кожевниковăн мăшăрĕ **Геннадий Николаевич КОЖЕВНИКОВ** вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх çыннисемпе пĕрле тарăннăн хурланнине пĕлтерет.

ООО «Агрофирма «Путь Ильича» Моргаушского района выражает глубокое соболезнование главному энергетику Харькову С.А. в связи с тяжелой утратой – смертью сестры **КУПЦОВОЙ Светланы Александровны.**

«Свобода» СПК-племзавод правленийĕ нумай çул хушши хуçалăхра тĕп инженер пулса ĕçленĕ **Геннадий Николаевич КОЖЕВНИКОВ** вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланни çинчен пĕлтерет.

Москакассинчи пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул коллективĕ çак шкулта нумай çул кĕçĕн классене вĕрентекен **Светлана Александровна КУПЦОВА** пирĕнтен вăхăтсăр ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайнă пирки çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе тарăннăн хурланни çинчен пĕлтерет.

## Прогноз погоды

| | четверг 3 мая | | | | пятница 4 мая | | | | суббота 5 мая | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Местное время | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 | 04:00 | 10:00 | 16:00 | 22:00 |
| Облачность % | | | | | | | | | | | | |
| Осадки мм | | | | | | | | | | | | |
| Температура °С | +4 | +7 | +10 | +7 | +4 | +9 | +11 | +5 | +1 | +11 | +17 | +15 |
| Давление мм | 740 | 738 | 736 | 736 | 738 | 740 | 742 | 744 | 747 | 749 | 746 | 741 |
| Влажность % | 83 | 84 | 56 | 71 | 78 | 56 | 44 | 74 | 89 | 48 | 38 | 67 |
| Ветер м/сек | 5 | 5 | 4 | 2 | 6 | 6 | 4 | 2 | 1 | 3 | 5 | 6 |
| | З | З | З | С-З | З | С-З | С-З | С | С-З | Ю-В | Ю | Ю |
| Солнце восход / заход | | 05:02 | 20:36 | | | 05:00 | 20:38 | | | 04:58 | 20:40 | |
| Луна восход / заход | | 17:04 | 03:31 | | | 18:34 | 03:51 | | | 20:06 | 04:14 | |
| фаза | | | | | | | | | | | | |


**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 9-10.**

**ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА от производителя. Замер. Доставка бесплатно. Низкие цены. Тел.: 8-987-576-65-62. 5-10.**

**В организацию требуются: токарь с опытом работы, автомаляр с опытом работы, автослесари по ремонту а/м ГАЗ-66, ГАЗ-53, ЗИЛ-131, УРАЛ. Тел.: 8-927-665-19-89, 8-909-301-90-73. 2-5.**



**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,0 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Николаева Н.Н.
Пичете панă 02.05.2012 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4634.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.